

# СĂПАЙЛĂХ, ТӐРКĂМĂЛЛĂХ, ЧĂТĂМЛĂХ, ЧУНЛĂХ...

**Митта Ваçлейĕ çуралнăранпа 80 çул çитнĕ май**

Сăпайлăх, тӳркăмăллăх, чăтăмлăх, чунлăх. Çак сăмахсен пĕлтерĕшĕсем пĕр сăмахра — митталăхра шăранса-пĕтĕçсе конкретлăх тупрĕç. Митталăх... Мĕн тери çитместь вăл пире тепĕр чухне!

Митта Ваçлейĕ тесен, тӳрех ун йывăр шăпине аса илетĕн, ирĕксĕрех вара сăвви-юррисем чĕлхе çине килеççĕ:

Хĕнпе хĕрсе туптаннă сассăм
Каллех ян хурçă пек таса...

Ян хурçă пек таса сăвăсем çырма таса чун-чĕреллĕ çын пулмалла. Хăрушă элек тӳссе курнă, «вунă çул лашманта та пилĕк çул чалтунта» çӳренĕ поэт чунĕ чулланман: вăл кашни кунне тĕрĕслĕх çĕнтересе ĕненсе пурăннă, кашни утăмне Çĕршыв ячĕпе, ун пуласлăхĕпе виçсе пуснă. Çăлкуç пек таса упраса хăварнă поэт хăйне. «Чухăн, анчах сывă (пур енчен те) таврăнатăп. Турра шĕкĕр!» — тесе çырать Митта хăйĕн тусĕ Алексей Талвир патне 1954 çул вĕçĕнче Çĕпĕр çĕрĕнчен.

Пысăк поэт пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калаçни ун самани çинчен калаçниех пулать, мĕншĕн тесен вăл, пĕр вĕçĕмсĕр вăхăта сехетпе виçнĕ пек, саманана чĕре таппипе виçет. Хальхи вăхăтра, парти вĕрентнĕ пек, сăмаха тӳррĕн калама хăнăхса пыратпăр. Хăй вăхăтĕнче «халăх тăшманĕ» тесе айăпланă Митта Ваçлейĕ çулĕпе утнă çынсем пулман-и вара пирĕн? Кая юлса пулин те, вĕсен ырă ятне халăха тавăрса парасси — ентешĕсен кăна мар, ĕçтешĕсен те тивĕçĕ, парăмĕ. Хăв çĕр çинче пурăнни харама ан кайтăр тесен, нумай-нумай тĕрĕс сăмах каламалла: шурри — шурах, хури хурах пултăр. Сутăнчăксемпе элекçĕсен ячĕсене те тӳррĕнех пĕлтермелле: халăх пурнăçне текех вăтăр çиччĕмĕш çул ан килтĕр. Карамзин калашле, истори ырă çынсене кăна мар, — çав шайрах, çав вăйпах тирансен ячĕсене те астуса юлмалла, унсăрăн малалла кайма çук.

Кашни талантлă çыравçă — пĕр вăхăтрах философ та. Митта Ваçлейĕн ăспа туйăм шăранса пулнă сăввисем шухăшлаттараççĕ, чуна кайса тивеççĕ. Унран вĕренмелли пайтах. Анчах паянхи кунччен те поэт еткерне туллин тишкĕрсе тухакан пулмарĕ-ха — хур тĕкĕпе унтан-кунтан тĕккелесе илнипех çырлахрăмăр. Те кĕмĕл çитменнипе, те кăмăл çуккипе аслă поэтăмăр çуралнăранпа 80 çул çитнĕ ятпа та ун çырнисен пуххине кăларăймарăмăр...

Кӳлемекри лăпкăлăх поэтшăн мар. Митта Ваçлейĕ вĕресе тăракан пурнăç варринче тăнă, çавăнпа ун тавракурăмĕ те анлă пулнă; этемлĕх хăй историйĕ умĕнче чи яваплă вăхăтра пурăннă вăл, çавăнпа ăстăн тĕлĕшĕнчен хăвăрт аталанса çитнĕ. Пур япала та кă сăклантарнă ăна, анчах поэт пĕр шикленмесĕр, хăйне мĕн кĕтнине пĕлмесĕр малаллах пăхнă. Уйрăм çын кунçулĕ те, халăх шăпи те шухăшлаттарать поэта. Интернацилле хутшăнура кашни халăхăн хăйĕн вырăнĕ, анчах çамрăк Совет çĕршывĕн пуласлăхĕ халăхсен туслăхĕнче, тет поэт. Тепĕр хут алла илсе вуласа тухăр-ха ун «Кăмăлăмпа шухăшăм» кĕнекине. Ленинла наци политикине тĕп-тĕрĕс ăнланнă Митта Ваçлейĕ. Ытти халăхсенни пекех, чăвашсен те прогрессивлă пахалăхсем нумай. Çав ырă пахалăхсемпе ытти халăхсем те усă курма пуçласан, нацилле хăйевĕрлĕх интернацилĕхе куçать. Анчах ăна «куçпа курни çитмест — çивĕч сисĕмпе туйса илмелле», — тесе çырать Митта. «Творчествăри нацилле элементсем алла çакланмаççĕ, вĕсем çутă пек, сывлăш пек, поэтăн пĕтĕм пултарулăхĕнче ирĕлсе тăраççĕ», — малалла тăсать калаçăвне вăл ăскăмăл культури пирки сăмах хускатнă май. Куçару ĕçĕнче нацилле хăйевĕрлĕхе упраса хăварма уйрăмах йывăр, анчах вĕсене — çав нацилле пахалăхсене, алăран вĕçертмелле мар, тĕнче культуринче сыхласа хăвармаллах, тесе асăрхаттарать поэт. Элекçĕсемпе çав вăхăтри тӳресем мĕнле йăнăш курнă-ши Миттан çакăн пек шухăшлавĕсенче? Национализм шăрши те çук кунта. Поэтăн чăн-чăн творчествви вăл чăн-чăн поэт-патриот, çав вăхăтрах поэт-интернационалист иккенне кăтартса парать, нацилĕхпе интернацилĕх диалектики марксизм-ленинизм вĕрентĕвĕнче шăранса ун сăввисене сăрхăнса кĕнĕ.

...Митта Ваçлейне эпĕ мĕнпурĕ те икĕ хутчен çех курнă: пĕррехинче — хамăр килте, тепрехинче — тупăкра...

1955 çулхине пулас — лайăх астумастăп — Василий Егорович таврăннă кăначчĕ-ха. Пирĕн патра аннепе тем калаçса ларатчĕç. Эпĕ, 12-13 çулхи ача, пурнăç тути-масине астивме тин çех пуçланăскер, ун куçĕнче ĕмĕрхи тунсăх тĕлкĕшнĕ пек астăватăп, халь вара çав тунсăха ун сăввисенче куратăп пек. Василий Егорович кайма пуçтарăнса ура çине тăчĕ, куççулĕ кивĕ кĕрĕкĕ çине пат тумласа ӳкрĕ, поэт сăра куркине шалт ĕçсе пачĕ. Ун чухне эпĕ, айванскер, пуç тавра шухăшласа илме пĕлмен, Миттан пĕр куççуль тумламĕ те пирĕн кулленхи инкек-синкексенчен чылай йывăртарах тайнине халĕ тин ăнлантăм. Ак камран вĕренмелле чăтăмлăха!

Миттасем пултаруллă йăх пулнă. Илле, Иван, Ваçлей, Петĕр, Якку, Коля пĕртăвансем пурте сăвăсемпе калавсем çырнă, ăста куçаруçăсем пулнă. Сăмахран, Коля сăввисене «Вĕçленмен юрăсем» кĕнекере вулама пулать, Иванĕ, калавсем çыр-

